Чăваш Республикин Пуçлăхĕн указĕпе килĕшӳллĕн 2022çул Чăваш енре чăвашсен мухтавлă çыннисен çулталăкĕ. Урок темине çак мероприятпе килĕшӳллĕн хатĕрленĕ.

**Эсир пĕлетĕр-и?**
**вăйă урок**

Хатĕрлекенĕ: Çĕрпӳ районĕнчи  Апакасси шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ Павлова Елена Александровна

Урок эпиграфĕ: Пĕличчен – йывăр, пĕлсен – çăмăл.

(Ваттисен сăмахĕ)

**Урок тĕллевĕ:**

- 1. ачасен тавракурăмне пуянлатасси
- 2. тавçăрулăха ӳстересси
- 3. шухăшлав хăвăртлăхне аталантарасси

**Вăйă йĕрки:**

- Вăйăра  2 тур,(командăпа та, пĕчченшерĕн те выляма пулать)
- Суйлав турĕ. 1-мĕш турта 4 темăпа ыйту ушкăнĕ. Кам ытларах ыйту çине тĕрĕс хурав парать, çав 2 –мĕш  тура куçать.  Кашни ыйтăвăн балл хакĕ пур(1-5б) .
- 2-мĕш турта 4 темăпа ыйту ушкăнĕ, кашнинче 5-шер ыйту, ыйту йывăрлăхне кура(5-25 б). Кам ытларах балл пухать,çав çĕнтерет, тĕрĕс мар хурав пулсан ыйту тепĕр ачана куçать.

**Тема: Чĕвĕлти чăваш чĕлхи**

1.Чăваш чĕлхи куне хăçан уявлаççĕ?( ака уйăхĕн 25-мĕшĕ)

2. Чăваш çĕнĕ çырулăхĕ пуçланнăранпа миçе çул çитрĕ? (151çул)

3. И.Я.Яковлевăн пĕрремĕш  алфавитĕнче миçе сас палли пулнă(47)

4.Чăваш чĕлхинчи хăш пуплев пайĕ вырăс чĕлхинче çук? (евĕрлев сăмахĕ)

5.Чăваш чĕлхи мĕнле чĕлхесен ушкăнне кĕрет? ( тĕрĕк)

**Тема :Чăваш литератури**

1.*Тухман çын тухсан тăман тухать* предложенире  мĕнле илемлĕх мелĕ пур? (аллитерации)

2.Чăваш Республика гимнĕн авторĕсем. ( Г. Лебедевпа И. Тукташ)

3. Казанков çыравçăн литературăри псевдонимĕ мĕнле-ши? (Хусанкай)

4. Çеçпĕл Мишшин чăн хушамачĕ. (Кузьмин)

5.Литература тĕсĕсем. (Эпика, лирика, драма)

| Чĕвĕлти чăваш чĕлхи | Чăваш литератури | Тăван енĕн паллă çыннисем | Тĕп хуламăр Шупашкар |
|---|---|---|---|
| 1 | 1 | 1 | 1 |
| 2 | 2 | 2 | 2 |
| 3 | 3 | 3 | 3 |
| 4 | 4 | 4 | 4 |
| 5 | 5 | 5 | 5 |

**Тема: Тăван енĕн паллă çыннисем**

1.Уйкас ялĕнче çуралнă паллă композитор ячĕ ( Аристарх Орлов-Шуçăм)

2. Уйкас ялĕн паллă артистки (Елена Шорникова)

3.Спортсмен, тренер, учитель. Раççĕй шайĕнче самбо кĕрешӳ мелĕн кĕмĕл призерĕ. ( Владимир Ядринцев)

4.Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьелте çуралнă паллă композитор, поэт, писатель, драматург, дирижер.(Ф. Павлов)

5. Çĕрпӳ хулинчи 1№ шкул кам ячĕпе хисепленсе тăрать? (М. Силантьев)

**Тема: Тăван хуламăр Шупашкар**

1.Шупашкар хулине хăçан никĕсленĕ? (1469ç )

2. Хула гербĕ çинче миçе, мĕнле кайăк ӳкернĕ? ( 5 кăвакал)

3. И.Яковлев палăкĕ ăçта вырнаçнă? (Наци библиотеки умĕнче)

4.МТВ -Центр вырнаçнă урам кам ячĕпе хисепленет? (И. Яковлев проспекчĕ)

5. Хула заливĕ хĕрринче чăваш тумĕн пысăк макечĕ пур? Мĕн вăл? (Тухья)

**II ТУР**

| **Чăваш енĕн паллă çыннисем** | **Чăваш театрĕ** | **Произведени ячĕ тăрăх авторне туп** | **Кам ку?** |
|---|---|---|---|
| 5 | 5 | 5 | 5 |
| 10 | 10 | 10 | 10 |
| 15 | 15 | 15 | 15 |
| 20 | 20 | 20 | 20 |
| 25 | 25 | 25 | 25 |

**Тема: Чăваш енĕн паллă çыннисем**

1. Тĕнче уçлăхне вĕçнĕ чăвашсен пĕрремĕш космонавчĕ(Андриян Николаев).

2. Будайка ялĕнче çуралнă паллă командир ячĕ ( Василий Чапаев)

3. П. Хусанкай арăмĕ, Раççей тава тивĕçлĕ артистки( Вера Кузьмина)

4. Чăвашсен пĕрремĕш президенчĕн ячĕ ( Николай Васильевич Федоров)

5. Паллă архитектор, Питĕрти «Çуллахи сад» карта авторĕ. (Петр Егоров)

**Тема: Чăваш театрĕ**

**1.**Чăваш театрне пуçласа яраканĕ( Иоаким Максимов-Кошкинский)

2.Чăваш театрĕ миçемĕш çулта пуçланса кайнă?(1918ç)

3.Пĕрремĕш спектакль мĕн ятлă пулнă? ( «Хăв пурăнас тенĕ пек ан пурăн»

4.Шупашкар хулинче миçе театр?(5)

5. Çĕрпӳ районĕнчен тухнă паллă артистсене асăнăр( Нина Григорьева, Н.Григорьев , Елена Шорникова, Елена Иовлева)

**Тема : Произведени ячĕ тăрăх авторне туп**

1. «Нарспи» поэма (К. Иванов)

2. «Арçури» (М.Федоров)

3. «Хăнаран» (М. Трубина)

4. «Тинĕсе» сăвă ( Çеçпĕл Мишши)

5. «Ягуар» ( М. Кипек)

**Тема: Кам ку?**

**1**. 1899çулта Канаш районĕнчи Касаккасси ялĕнче çуралнă паллă поэт ( Çеçпĕл Мишши)

2.1890 çулта Пушкăрт республикинчи Слакпуç ялĕнче кун çути курнă поэт. (К. Иванов)

3.1907 çулта Тутар республикинче Сиктĕрме ялĕнче  çуралнă поэт ( П. Хусанкай

4. 1848 çулта Тутар республикинче кун çути  курнă паллă вĕрентекен,  (И. Яковлев)

5. 2020 çултанпа Чăваш Республикин ертӳçи шутланать. ( О. А. Николаев)

Урок пĕтĕмлетĕвĕ. Ачасен ĕçне хак пани.